Герольд ПЛЕЧОВ,

философи ăслăлăхĕсен кандидачĕ

Чăваш вăййи



Чăвашсен йăли-йĕрки хушшинче çамрăксен вăййи пур. Вăл çын пурнăçĕпе, кун-çулĕпе таччăн çыхăнса тăнисĕр пусне тата хăйĕн хӳхĕмлĕхĕпе, илемлĕхĕпе палăрса тăрать. Çакна ытти халăх çыннисем те асăрханă, пысăк хак панă. XIX-мĕш ĕмĕрте пурăннă вырăс писателĕ Н.Г.Гарин-Михайловский чугун çул тунă çĕрте инженер пулса ĕçленĕ чух чăваш ялĕнче çурхи ака хыççăн йĕркеленĕ уява курать, уйрăмах çамрăксен вăййине сăнать. «Ешĕл улăхра çамрăк хĕрсемпе каччăсем вăйă картине тăнă. Хĕрĕсем хĕрлĕ хăмачпа илемлетнĕ шурă кĕпепе, пилĕкĕсене шерепеллĕ хĕрлĕ пиçиххи çыхнă, пуçĕсене ĕлĕкхи çар çыннисем евĕр шĕвĕр вĕçлĕ тимĕр калпаксем тăхăннă, кăкăрĕсем çине кĕмĕл укçасене пухса çĕленĕ вăрăм çакăсем усăнса анаççĕ»,- асăрханă вырăс çынни. Вăл çывхарнине курсан çамрăксем чăл-пар саланса кайнă. Палланă ватă хĕрсене ӳкĕте кĕртсен çеç вăйă çĕнĕрен пуханнă. «Эпĕ вĕсем мĕнле пуçтараннине пăхрăм: çирĕппĕн, кал-кал, лăпкăн утса, – çырать Н.Г.Гарин-Михайловский. – Çывхарсан хĕрсем пĕр-пĕрне аллисенчен тытрĕç те пысăк карта туса юрлама тытăнчĕç. Çакнашкал хăйне евĕрлĕ тĕлĕнтермĕш – пĕр вăхăтрах юрă та, театр та – эпĕ нихăçан та курман. Тĕрĕсрех, сцена çинче – балетра, оперăра – курнă. Анчах ку балет та, опера та мар – пурнăç. Вăйă карти кал-кал, майĕпен шурĕ; хĕрсем малтанхи утăмне пысăккăн пусрĕç, кăштах чарăнса тăрсан тепĕр урине хуллен шутарса лартрĕç.

Сцена çинче çакă, тен, пуçран шухăшласа кăларнă япала пек туйăннă пулĕччĕ, кунта вара çамрăк хĕрсен вăйă карти вырăнлă тата калама çук илемлĕ пулчĕ... Вăхăт-вăхăт юрă ырă шăршăпа тулнă уй çийĕн янăраса пĕлĕтелле хăпарчĕ, унта тăри юррипе пĕрлешрĕ. Иртнĕ вăхăтсене аса илтерекен çепĕç юрă...

Мĕн вăл опера, мĕн вăл романс?! Ĕмĕр çамрăк çуркуннен ырă шăршине, иртсе пыракан ĕмĕрсен ăшă тунсăхне сăнласа парĕç-и вĕсем? Кунашкал юрра шухăшласа кăларма пулать-и?..

...Эпĕ кайрăм, анчах куç умĕнче чылайччен капăр улăхра хăйсен туррисене ĕненекен хĕрсен ушкăнĕ пулчĕ, эпĕ çаплипех вĕсен юррине илтрĕм, унăн çемми манăн чунра çепĕççĕн янăрарĕ...»

Хамăрăн И.Я.Яковлев, чăваш çамрăкĕсен вăййине аса илсе, çап-

ла ҫырать: «80-мӗш ҫулсенче *(сӑмах XIX-мӗш ӗмӗр ҫинчен пырать – **Г.П.**)*, эпӗ ун чухне 30 ҫулсенче пынӑ, Чӗмпӗр кӗпернинчи Пӑва уездӗнчи Чӗмпӗртен 50 ҫухрӑмра вырнаҫнӑ Киштек ялӗ ҫывӑхӗнче, ҫулла, ӑнсӑртран ӗҫпе иртсе пынӑ чухне чӑваш вӑййине куртӑм, палӑрмасӑр ҫил арманӗ хыҫне пытанса каҫпа 11 сехетрен пуҫласа 3 сехет иртиччен сӑнарӑм. Ҫамрӑксем (каччӑсемпе хӗрсем), икӗ ушкӑна пайланса – пӗри пысӑкрах, тепри пӗчӗкрех, – ҫыхӑнуллӑ, илемлӗн, хавхануллӑ юрӑсемпе пӗр-пӗрин ҫине пычӗҫ, ушкӑн витӗр тухса каялла таврӑнчӗҫ, каллех пӗр-пӗрин ҫине пычӗҫ. Юрлани ҫав тери хитре, ташшисем хӳхӗм. Мана хамӑн ачалӑх аса килчӗ, вӗсем ҫине куҫ-ҫульсӗр пӑхаймарӑм. Эпӗ хаваслӑх вӗҫлениччен кайрӑм». Иван Яковлевич ҫамрӑксен вӑййи ҫинчен хӑйӗн вӗренекенӗсене, юлташӗсене час-часах каласа кӑтартнӑ. Вӑл чӑваш юррисем хӑй евӗрлӗ, шухӑшӗсем чыслӑ пулнине, кӗввисем чуна хумхантарнине палӑртнӑ.

Астӑватӑп-ха, Аслӑ Пӑла шывӗ хӗрринче вырнаҫнӑ пирӗн ялта та ҫуркуннесенче урамсем кӑштах типсен каҫпа хӗр упраҫпа каччӑсем касси-кассипе пӗр-пӗр ҫурт умне пухӑнса ларатчӗҫ. Вӗсем купӑс ҫеммипе е ахаль алӑ ҫупса такмаксем калатчӗҫ, ташлатчӗҫ, сассисене тӗрӗслес тенӗ пек вӑйӑ юррисене юрлатчӗҫ. Каярахпа вара ҫамрӑксем пӗтӗм ялӗпех тимӗрҫ лаҫҫи ҫумӗнчи лапама пухӑнса вӑйӑ йӗркелетчӗҫ. Ҫимӗк кунӗнче тури кас кӳлли ҫумӗнчи улӑхра кӑнтӑрла вӑйӑ иртеретчӗҫ. Вӑйӑ тапхӑрӗ Питрав уявӗччен тӑсӑлатчӗ. Эпир, шкула кайман е пуҫламӑш классенче вӗренекен ачасем, ҫамрӑксенчен хӑпмастӑмӑрччӗ, каҫхи вӑйӑ карти таврашӗнче выляттӑмӑр, хӗрсем юрланине итлеттӗмӗр, е пӗр-пӗр каччӑ хӗр тусне вӑйӑран илсе тухсан вӗсем хыҫҫӑн чупаттӑмӑр. Ҫавӑншӑн пире каччӑсенчен часчасах пиҫиххи вӗҫӗ те лекетчӗ. Тепӗр чухне аслисене кура хамӑр та пӗр-пӗр кӗтесре вӑйӑ йӗркелеттӗмӗр...

Урӑхла каласан, пирӗн вӑхӑтри ӑрусем чӑваш вӑййисене курса, вӗсене хутшӑнса ӳснӗ.

Анчах иртнӗ ӗмӗр варринче ялсенче чӑваш ҫамрӑкӗсен вӑййи вӑйсӑрланма, пӗтме пуҫларӗ. Нумай ҫынна пӑшӑрхантарчӗ ку. 60-мӗш ҫулсенче эпир (ун чухне эпӗ Патӑрьел парти райкомӗн иккӗмӗш секретарӗ пулса ӗҫлеттӗм) асӑннӑ илемлӗ йӑла-йӗркене сыхласа хӑварма майсем шырарӑмӑр. Ҫамрӑксен вӑййисене малтанах ялсенче йӗркелеме сӗнтӗмӗр. 1966 ҫулта районти акатуйра аслӑ вӑйӑ иртерме йышӑнтӑмӑр. Ҫав тӗллевпе ялсенче вӑйӑри юрӑ сӑмахӗсене пухас терӗмӗр. Учительсем, клубсемпе библиотекӑсенче ӗҫлекенсем, комсомол активисчӗсем хавхаланса ӗҫе пикенчӗҫ, кӗске вӑхӑтра сакӑр ҫӗре яхӑн вӑйӑ ҫаврӑмӗсене ҫырса илчӗҫ. Вӗсенчен аллӑшне, пур ҫамрӑка та килӗшме пултарнисене, суйласа илсе ротапринтпа ҫапрӑмӑр, уйрӑм алҫырусем туса художество пултарулӑх ушкӑнӗсене салатса патӑмӑр.

Ҫапла вара Патӑрьел районӗн акатуйӗнче пӗрремӗш хут ҫамрӑксен аслӑ вӑййи пулса иртрӗ. Шӑнкӑртам вӑрманӗн уҫланкинче нумай тӗслӗ чӑваш кӗписене тӑхӑннӑ ҫамрӑк хӗрсем алла-аллӑн тытӑнса ҫавра вӑйӑ карти турӗҫ, вӗсем хушшине каччӑсем, тутарпа ирҫе хӗрӗсем тӑчӗҫ. Вара юрӑ янӑраса кайрӗ:

Атьӑр вӑййа тухар-и,
Ҫӗнӗ юрӑ юрлар-и?
Пирӗн юрӑ ян кайтӑр,
Ял-йыш илттӗр, савӑнтӑр.

Вӑйӑ хӑйӗн ӗлӗкрен пыракан йӗркипе пӗр самант вырӑнта тӑчӗ, унтан кукӑрмакӑр куҫрӗ; каллех хӑй вырӑнне таврӑнчӗ. Тулли кӑмӑлпа, хавхаланса юрларӗҫ ҫаврӑмсене.

Пурте палӑртнӑ пек пулмарӗ пулсан та (вӑйӑ картинче тата йышлӑрах курасшӑнчӗ ҫамрӑксене), пуҫару халӑха килӗшрӗ. Малашне вара районта иртекен ҫурхи уявра кашни ҫул вӑйӑ йӗркелеме тытӑннӑ. Пирӗн хыҫҫӑн ытти вырӑ-

нсенче те ку ĕçе пуçларĕç. Патăрьел районĕнчи кăçалхи акатуйра та çамрăксен вăййи пулни çинчен пĕлтĕмĕр.

Калас пулать, чăвашсем «вăйă» тесе тĕрлĕ вылявсене те калаççĕ. Кунта эпир çамрăксем каçпа е кăнтăрла çавра ушкăна пухăнса çаврăмсем юрласа ирттерекен вăйă çинчен калаçатпăр, хăш-пĕр çĕрте ăна «вăйă карти» теççĕ. Ташă вăййи те пулать, ун чух çамрăксем сăвă каласа ташлаççĕ. Вăйă çаврăмĕсемпе ташă такмакĕсем хушшинче пĕр пеклĕхĕ нумай пулсан та, пирĕн шутпа, вĕсем пĕрпĕринчен уйрăлса тăраççĕ. Вăйă юррисенче шухăша тикĕсрех, лăпкăнрах, хăйосăртарах калаççĕ, кĕвви çепĕçрех, ăсталăхĕ ушкăнра палăрать. Такмаксенче вара сăмах-шухăш вичкĕнрех, хытăрах, хивререх илтĕнет; кĕвви те çав майлă, ташлаканĕ хăйне ирĕкрех туять, ыттисене сахалтарах пăхăнать.

Юрă вăййипе ташă вăййи хутăш та пулнă, ун чухне ушкăнпа юрланă юрă хушăран ташша куçнă, кайран каллех юррине тăснă. Юхма енче вăййа тухас умĕн тата вăйă пĕтсен хĕрсемпе каччăсем хăйсен кассинче пуçтарăнса такмак каласа ташлатчĕç. Чи илемли – юрă вăййи.

Шел пулин те, вăйă халĕ йăларан тухса пырать, ытларах ăна фольклор шăпи кĕтет. Сăлтавĕсем чылай. Вăтам шкул пĕтернĕ хĕрсемпе каччăсем, телевизорпа эстрада концерчĕсем курса тăраннăскерсем, вăйă картине тăрасшăн та мар, ĕлĕкхи вăйă йĕркипе юрă сăмахĕсене пĕлмеççĕ те. Тĕп сăлтавĕ – вăйăн обществăри никĕсĕ улшăнни. Вăйă вăл чăваш тĕрлĕ турра ĕненсе пурăннă тапхăрпа çыхăннă йăла-йĕркене, тавра курăма. Халĕ вара уйрăм çынна харпăр хăй тĕллĕн пурăнма чĕнекен йĕрке вăй илсе пырать. Апла пулин те чăваш вăййи чăваш халăхĕшĕн, унăн культуришĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Вулакансене хăй вăхăтĕнче Юхма тăрăхĕнче пухнă вăйă юррисемпе паллашма сĕнесшĕн.

***

Атьăр вăййа тухар-и,
Çĕнĕ юрă юрлар-и?
Пирĕн юрă ян кайтăр,
Ял-йыш илттĕр, савăнтăр.

Атьăр вăййа тухар-и,
Тантăшсемпе выляр-и?
Сар хĕр вăййа тухмасан
Сар ачисем кăмăлсăр.

***

Чӳречĕр хуппи сăрлă
иккен,
Сар кайăксем ларнă иккен.
Тантăш, сире курманччĕ,
Сар кайăк пек пулнă иккен.

Сиксе, сиксе шыв юхать,
Пулли ăçта тăрать-ши?
Кăçал кайнă çĕнĕ çын,
Чунĕ ăçта тăрать-ши?

Кас суханне касмăттăм,
Çиес килни пĕтерет.
Çакă вăййа тухмăттăм,
Юрлас килни пĕтерет.

Анмăттăм шывăн хĕррине,
Юратап шывăн сулхăнне.
Тухмăттăм эпĕ çак вăййа,
Юратап хĕрсен сассине.

Чӳрече хуппи сăрлă иккен,
Хура чĕкеç ларнă иккен.
Хĕрсем, сире курманччĕ,
Сар кайăк пек пулнă иккен.

Сĕтел çинче сар супăнь,
Илем-и те çăвнам-и?
Тантăшăм, сире юратса,
Пĕр-ик сăвă юрлам-и?

Пласси-пласси шур хурăн,
Пласса илемне çав кӳрет.
Выльăр, кулăр, тантăшсем,
Вăй илемне çав кӳрет.

Йĕс таканлă аттăр пур,
Такăрлатăр çереме.
Йĕс шăнкăрав пек сассăр пур,
Янăраттăр урама.

Каçăр, каçăр шыв урлă,
Шыв сирпĕнсе тăмалла.
Ӳсĕр, ӳсĕр хĕр пулса,
Çын тĕлĕнсе тăмалла.

***

Чĕкеç вĕçет сăрт тăрăх,
Ларса канать çĕр çине.
Тантăш каять аякка,
Çав çунтарать чĕрене.

Авăт, авăт, куккукçăм,
Чăрăнасси инçе мар.
Выльăр, кулăр, тантăшсем,
Вăй иртесси инçе мар.

Чашки, чашки вĕт пăрса,
Сиктермелле выляр-и?
Айтăр, айтăр, тантăшсем,
Çаврăнмалла выляр-и?

Сиктĕр те сиктĕр сиктĕрми,
Пĕр сиктерсе ярар-и?
Курма килнĕ çынсене,
Савăнтарса ярар-и?

Шур пӳрт мăрйи илемлĕ,
Шуратсассăн епле-ши?

Патăрьелсен каччисем
Тумлантарсан мĕнле-ши?

Хамăр çулнă çарана,
Паккуссенчен паллатпăр,
Хамăр савнă ачана
Картусĕнчен паллатпăр.

Вăрман тăрăх хурт каять,
Çăка йывăç шыраса.
Эпир кунта килтĕмĕр
Савнисене шыраса.

Утна ăçтан кăкарас?
Улма йывăç тĕпĕнчен.
Савни, сана ăçта курас
Çакă вăййа тухмасан?

Улма йывăç, ут юпи
Ут кăкарсан илемлĕ.
Ай-хай хавас вăййăмăр,
Сар каччăпа илемлĕ.

***

Хура кĕпе тăхăнсан
Аса килет шур саппун.
Хĕвел ансан, каç пулсан
Аса килет савнă тус.

Хурăнтан кунтăк çĕлеттĕм,
Хурăн хуппи сĕвĕнмест.
Эп ют çынна саваттăм,
Тусран чунăм сивĕнмест.

Каçма хутăм шыв çине,
Йывăç турат пур çĕре.
Çулçă пулса вĕçеттĕм,
Хамăн савни пур çĕре.

Акăшĕ ăçта кайрĕ-ши?
Хир илемне кÿретчĕ.
Савни ăçта кайрĕ-ши?
Вăй илемне кÿретчĕ.

Ан авăт куккук хир урлă,
Хир вăрман пек янрас çук.
Ан калаç, савни, ют хĕрпе,
Ют хĕр ман пек калаçмасть.

Каçма хутăм шыв çине,
Йывăç турат пур çĕре.
Çыру çырса хут ятăм,
Хамăн савни пур çĕре.

Хура саппун кĕсйи çук,
Кĕсьесĕр те юрĕ-ха.

Пирĕн савни кунта çук,
Савнисĕр те юрĕ-ха.

Пĕрене çумне мăк шăтнă,
Кайăк йăва çавăрнă.
Хĕрсем, сире мĕн пулнă?
Шăлăрсене шарт çыртнă.

Садра сарă кайăк çук,
Çавăнпа садăн илем çук.
Вăйăра купăс сасси çук,
Çавăнпа вăййăн илем çук.

***

Калуш пуçĕ çутă мар,
Пире çутă кирлĕ мар.
Пире вăйă выляма
Куштан ача кирлĕ мар.

Шур тутăра кам тиркет?
Кам илеймест, çав тиркет.
Пирĕн ял хĕрне кам тиркет?
Кам илеймест, çав тиркет.

Çерем çийĕ чап-чапăр,
Пурте çерçи йĕррисем.
Вăйă вырăн тап-такăр:
Хĕрпе каччă йĕрĕсем.

Тăри каять сăрт тăрăх,
Сасси килет шыв тăрăх.
Качча каять аякка,
Салам килет хут тăрăх.

Ана çинчи шур чие –
Тутлă çырла тееççĕ.
Хĕр чухнехи ĕмĕре
Хăналăха тееççĕ.

Шур турилкке янăрать
Шур çăмарта хунăран.
Паян вăйă янăрать
Пур хĕр вăййа тухнăран.

Çĕмĕрт çеçки çуралать те
Килет пахча илемĕ.
Шурă кĕпе тăхăнсан та
Килет вăйă илемĕ.

Умма çакрăм çут шăрça,
Ум илемне кÿресшĕн.
Вăййа тухрăм тумланса,
Вăй илемне кÿресшĕн.

***

Кĕске саппун çĕлетрĕм,
Кĕске тесе ан калăр.
Сăв пуçласа каларăм,
Шухă тесе ан калăр.

Çĕнĕ çуна тупанне
Якатмашкăн тухрăмăр.
Ан ятлăр-ха, ваттисем,
Савăнмашкăн тухрăмăр.

Кунта уяв иртсессĕн
Лартаççĕ-ши сулхăнра?
Лармăпăр-ха сулхăнра,
Кайăпăр-ха тыр вырма.

Улăхрăм çÿллĕ ту çине,
Пăхрăм тăхăр ял çине.
Тăхăр ялăн çийĕнче
Патăрьел ларать хула пек.

Çирĕк çулçи çиле май,
Айтăр хĕрсем, киле май.
Тата пăртак тăрар-ха,
Сар йĕкĕтсем килеймен.

Шур саппунăр хуралсан,
Çакассăр та килĕ-ха.
Вăйă пĕте пуçласан,
Тухассăр та килĕ-ха.

Çирĕк çулçи çиле май,
Вĕрене çулçи вĕрене май.
Пирĕн шухăш киле май,
Сирĕн шухăш мĕнле май?

Чĕрече çинчи кусĕски –
Пăхма вăхăт çитрĕ пуль.
Эх, тантăшăм, хĕр тантăш,
Кайма вăхăт çитрĕ пуль.

Хăяр акса хăварма
Хăяр вăрри пулмарĕ.
Тăрса сăвă калама,
Сассăм усă пулмарĕ.

Улт çĕвĕллĕ шур кĕпе
Çич çĕвĕллĕ пулинччĕ.
Ай-хай хавас вăйăсем
Малашне те пулинччĕ.

Çăка çулçи çилелле,
Вĕрене çулçи хирелле.
Айтăр, хĕрсем, килелле,
Ыран ĕçе çитмелле.